Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

79 (8040) № ✻ Шăмат кун, 2012 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 13-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ыран – Ял хуçалăхĕпе тирпейлекен промышленноç ĕçченĕн кунĕ



*«Путь Ильича» агрофирмăра пĕр улшăнмасăр нумай çул ĕçлесе ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăракансем сахал мар. Вĕсенчен пĕрисем – эсир паян сăн ӳкерчĕкре куракансем. Калерия Петровна Димитриева ветеринари фельдшерĕ (сулахайра) хăйĕн ĕçне вăхăтра та ăста пурнăçланипе палăрса тăрать. Нумаях пулмасть вăл ĕçри ӳсĕмсемшĕн район администрацийĕн Тав çырăвне тивĕçрĕ. Унăн юлташĕ Светлана Александровна Иванова та общеcтвăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче вунă çул ытла вăй хурать. Хăйĕн тăрăшулăхĕпе вăл та – ыттисемшĕн ырă тĕслĕх.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

**ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АГРОПРОМЫШЛЕННОÇ КОМПЛЕКСĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире Ял хуçалăхĕпе тирпейлекен промышленноç ĕçченĕн кунĕ ячĕпе пĕтĕм чунтан саламлатăп!

Раççей – сивĕ климатлă çĕр-шыв. Çавна май кунта хресчен ĕçĕ кирек хăçан та çăмăл пулман, çапах çав вăхăтрах ку ĕç чи хисепли шутланнă, вĕт вăл патшалăхăн апат-çимĕç хăрушсăрлăхĕ çине кăна мар, общество, кашни çемье тата кашни уйрăм çын хайне мĕнлерех туясси çине те тӳрремĕнех витĕм кӳрет.

Чăваш Ен экономикинче агропромышленноç комплексĕ паллă вырăн йышăнать, çавна пулах «АПК аталанăвĕ» приоритетлă наци проектне пурнăçлас енĕпе пирĕн республика чи лайăх регионсенчен пĕри шутланать. Патшалăхăн витĕмлĕ пулăшăвне пула Чăваш Республикин аграри секторĕ, ĕç кăтартăвĕсене çулсерен лайăхлатса пырса, кал-кал аталанать. Сăмахран, юлашки пилĕк çулта Чăваш Енре тыр-пул туса илесси 53,3 процент чухлĕ ӳснĕ, çĕр улми енĕпе ӳсĕм – 22,3 процент, пахча çимĕç енĕпе – 1,9 хут. Республикăри мĕн пур ял хуçалăх таварĕсене туса илекенсене ĕçченĕсене ĕçленĕхпе тăрăшулăхшăн тата çак социаллă пĕлтерĕшлĕ ĕçе яваплăха туйса пурнăçланăшăн чунтан тав тăватăп.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

**ХИСЕПЛĔ ЯЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ! ÇАК СУМЛĂ ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире мĕн пур кăмăлтан Ял хуçалăхĕпе тирпейлекен промышленноç ĕçченĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп.

Мĕн ĕмĕртенпех сумлă та пархатарлă пулнă ял хуçалăхĕнче вăй хуракансен ĕçĕ. Эсир канлĕх мĕнне пĕлмесĕр тăрăшнăран ĕнтĕ пирĕн сĕтел апат-çимĕçпе тулăх. Тыр-пул, пахча çимĕç çитĕнтеретĕр, выльăх апатне хатĕрлетĕр – кашни ĕçе чунтан юратса тăватăр.

Кăçал та тухăçлă тыр-пул, çĕр улми туса илес тесе тăрăшрăр. Çанталăкăн кашни саманчĕпе усă курса вĕсене пуçтарса илес тесе тимлерĕр, выльăх апатне хатĕрлерĕр, кĕр тыррисене акса хăвартăр. Тавах сире çакăншăн.

Выльăх - чĕрлĕх отраслĕнче те хăйсен ĕçне юратакансем вăй хураççĕ. Аш-какай, сĕт, çăмарта ытларах туса илессишĕн тимлеççĕ. Вĕсене те чунтан тав тăвас килет.

Районти хресчен (фермер) хуçалăхĕсене, килти хушма хуçалăх тытакансене те тав сăмахĕ калас килет. Район аталанăвĕнче вĕсен тӳпи те çителĕклех.

Шкулсенче вĕренекенсем те ырă сăмаха тивĕç. Çуллахи вăхăтра ял хуçалăх культурисене çум курăкран тасатнă çĕрте те, вырмара йĕтемсем çинче те, кĕркунне ял хуçалăх предприятийĕсенче çĕр улми кăларнă çĕрте те аслисенчен кая мар тăрăшрĕç вĕсем.

Тавах сире пурне те пархатарлă ĕçĕршĕн, чăтăмлăхăршăн, тăван çĕре юратнăшăн.

Халĕ умра тĕллев: выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçармалла, вĕсен йышне сыхласа хăвармалла, выльăх-чĕрлĕх продукцине ытларах туса илмелле. Мĕн палăртнине пурнăçламалла пултăр сирĕн.

Пурне те сирĕн сывлăхлă вăрăм кун-çул сунатăп. Ĕçĕрсем ăнса, сулăрсем уçăлса пыччăр. Инкек-синкек сирĕнтен айккинчен пăрăнса иртĕр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. ТИМОФЕЕВ.**

Республикăра

## Çĕрпе усă курассинче йĕрке çукрах-ха

Октябрĕн 10-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ЧР Министрсен Кабинечĕн ларăвне ирттернĕ. Лару пуçламăшĕнче вăл çĕр хутшăнăвĕсен ыйтăвĕ çинче чарăннă. Ăнсăртран мар. Ытлари кун РФ Патшалăх Канашĕн Президиумĕн ларăвĕнче шăпах çĕр пирки çивĕч калаçу пулнă.

Республика Пуçлăхĕ çĕр-шыв Президенчĕн сăмахĕсене илсе кăтартнă. Патшалăх Канашĕн Президиумĕн ларăвĕнче Владимир Путин коррупципе çыхăннă пулăмсем çĕр хутшăнăвĕсене аталантарма чăрмантарнине палăртнă. Кунта хушма мерăсем йышăнас пулать, чăрмавсене сирмелле. Граждансем ирĕклĕнех çĕр участокĕсем илме, вĕсемпе усă курма пултарччăр. Çĕре харпăрлăха илнисенчен хăшĕсем хальхи вăхăтра вĕсемпе эффективлă усă курмаççĕ, кайран вуншар хут хаклăрах хакпа сутас тĕллевпе кĕтеççĕ, ниĕпле ĕçсем те пурнăçламаççĕ.

Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх республика Правительстви юлашки çулсенче ял хуçалăх тĕллевлĕ 709 гектар çĕре çурт-йĕр строительстви валли куçарнă. Анчах та паянхи куна çĕрпе усă куракансенчен 10 проценчĕ кăна хăйсен обязательствисене пурнăçлать, ытти 90 проценчĕ çĕре илсе сутма кăна туяннă.

Республика Пуçлăхĕ ку тĕлĕшри патшалăх позицине тепĕр хут уçăмлатнă – каялла илмелле кун пек çĕр участокĕсене. Паллах, вĕсене туртса илмĕç, туянĕç, анчах та харпăрлăх хуçисем ыйтакан хаксемпе мар. Çĕр лаптăкĕсем нумай ачаллă çемьесене тивĕçтерме, пĕчĕк тата вăтам бизнеса аталантарма, çурт-йĕр строительстви валли кирлĕ.

## Çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтерме – 70 млн тенке яхăн

Юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче Раççей Регионсен аталанăвĕн министерствинче 2011–2015 çулсенче федерацин «Пурăнмалли çурт-йĕр» тĕллевлĕ программин «Çамрăк çемьесене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтересси» çум программине пурнăça кĕртмешкĕн хутшăнма федераци субъекчĕсене конкурс ирттерсе суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссин ларăвĕ пулнă. Унта 2012 çулта регионсене çак çум программăна пурнăçлама мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ кирлипе, çавăн пекех ăна федераци субъекчĕсен хушшинче валеçессипе çыхăннă ыйтăва сӳтсе явнă. Хушма субсидисен пĕтĕмĕшле виçи 378,425 млн тенкĕпе танлашнă. Комисси йышăнăвĕпе ăна 19 регион хушшинче пайланă.

Чăваш Республики çамрăк çемьесене пулăшу кӳме 69,94 млн тенкĕ илнĕ. Федераци уйăрнă укçа-тенкĕ кăçал Чăваш Енри тата 380 çамрăк çемьене ку чухнехи хăтлă çурт-йĕрпе тивĕçтерме май парать. 2006 çултанпа, федерацин çак программи вăя кĕнĕренпе, республикăри 3357 çамрăк çемье патшалăх пулăшăвĕ илнĕ, пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатнă.

Конкурс

## Çулталăк çемйи – Прокопьевсен çемйи

«Çулталăк çемйи» ятпа районта конкурс йĕркеленĕччĕ. Кăçал ку конкурса пĕтĕмпе 7 çемье хутшăнма кăмăл тунă. Октябрĕн 11-мĕшĕнче конкурс комиссийĕ тăратнă материалсене пăхса тухса итогсене пĕтĕмлетрĕ.

Комисси пĕр саслă пулса «Çулталăк çемйи» конкурсра Оринин ял тăрăхне кĕрекен Вăрманкассинче пурăнакан Оксана Валерьевнăпа Алексей Георгиевич Прокопьевсен çемйи мала тухнă тесе йышăнчĕ. Вĕсен республика конкурсне хутшăнмалла пулать.

Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Светлана Леонидовнăпа Алексей Иванович Николаевсен çемйи «Чи туслă çемье» номинацире, Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Светлана Александровнăпа Вячеслав Владимирович Скворцовсен çемйи «Чи творчествăлла çемье» номинацире, Турай ял тăрăхĕнчи Ирина Михайловнăпа Дмитрий Юрьевич Пановсен çемйи «Социаллă чи ответлă çемье» номинацире, Çатракасси ял тăрăхĕнчи Надежда Германовнăпа Андрей Анатольевич Ивановсен çемйи «Чи ĕçчен çемье» номинацире, Катькас ял тăрăхĕнчи Надежда Александровнăпа Радим Петрович Мироновсен çемйи «Йăлайĕркене упракан чи лайăх çемье» номинацире, Ярослакра ял тăрăхĕнчи Олеся Витальевнăпа Алексей Николаевич Димитриевсен çемйи «Спортпа туслă çемье» номинацире палăрчĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Йышăну

## Техникăна – хĕллехи управа

ЧР Ял хуçалăх министерствипе çĕр ĕçĕнче ĕçлекен техникăна пăхса тăракан патшалăх инспекцийĕн пĕрлехи приказĕпе килĕшӳллĕн район администрацийĕн йышăнăвĕ кун çути курчĕ. «Ял хуçалăх техникине управа лартассипе смотр ирттересси çинчен» йышăнупа вăл районта юпа уйăхĕн 8 – 26-мĕшĕсенче иртет. Смотр ирттерме йĕркеленĕ комиссие район администрацийĕн пуçлăхĕн 1-мĕш çумĕ, экономика, АПК аталанăвĕн тата муниципаллă харпăрлăх управленийĕн пуçлăхĕ В. Ананьев ертсе пырать. Йышăнура смотр валли ятарлă график çирĕплетнĕ.

**С. НИКОЛАЕВ, ЧР патшалăх техника надзор инспекцийĕн районти инспекторĕ.**

Кĕскен

## Кашни виççĕмĕш çемье кредит илнĕ

Ял çыннисем килти хушма хуçалăха аталантарма çăмăллатнă кредитсем активлă илеççĕ. «АПК аталантарасси» наци проекчĕ вăя кĕме пуçланăранпа районта 4246 кредит панă, пĕтĕмпе 690,4 миллион тенкĕлĕх.

Кредита ял çыннисем ытларах выльăх-чĕрлĕх хуралтисем тума е юсама тата ял хуçалăх техники туянма илеççĕ.

Кредитпа Катькас, Оринин, Муркаш ял тăрăхĕсенче пурăнакансем ытларах усă кураççĕ.

Ыран – суйлав

## Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене суйлаççĕ

Ыран, октябрĕн 14-мĕшĕнче, Муркаш, Чуманкасси тата Йӳçкасси ял тăрăхĕсен территорийĕсенче суйлав иртет. Асăннă ял тăрăхĕсен территорийĕсенче пурăнакан суйлавçăсен хăйсен ял тăрăхĕн пуçлăхне суйламалла пулать. Муркаш ял тăрăхĕн территорийĕнче вырнаçнă 3, Чуманкасси ял тăрăхĕнчи 2 тата Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи 4 суйлав участокĕ хăйсен суйлавçисене йышăнма хатĕр.

Суйлав участокĕсем ирхи 8 сехетре ĕçлеме пуçăнаççĕ. Ку е вăл кандидатшăн 20 сехетчен сасăлама май пулĕ. 20 сехет хыççăн сасăлав вĕçленет.

Кашни суйлавçă хăйĕншĕн кăна сасăлать. Сасăламалли бюллетене алла илнĕ чухне паспорт ыйтĕç. Çавăнпа та суйлав участокне кайнă чухне пĕрле паспорт илме манмалла мар.

Муркаш, Чуманкасси тата Йӳçкасси ял тăрăхĕсен территорийĕсенче пурăнакан суйлавçăсем ыранхи суйлавра активлăх кăтартасса, тивĕçлĕ кандидатсемшĕн сасăласса шанас килет.

Çырăнтару – 2013

## Хаклă вулаканăм!

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2013 çулхи январьтен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Эпир вулакансене пĕлтернĕччĕ, июль уйăхĕнчен шăмат кунсенчи кăларăм 8 страницăпа тухма пуçларĕ.**

**Райхаçат редакцийĕ.**

## Ыран – Ял хуçалăхĕпе тирпейлекен промышленноç ĕçченĕн кунĕ

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Пĕлтĕрхи ĕç кăтартăвĕсем тăрăх Чăваш Ен ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ 100 гектар çĕр пуçне 52,8 тонна сĕт туса илсе Атăлçи федераци округĕнче 1-мĕш, аш-какай туса илес енĕпе вара – ку кăтарту 11,3 тонна – иккĕмĕш вырăна тухнă. 2012 çулта та кал-кал аталану лайăх шайра сыхланса юлать. Кăçалхи 8 уйăх хушшинче аш-какай, сĕт тата çăмарта туса илесси тивĕçлĕн 11,7, 1,1 тата 6,6 процент чухлĕ ÿснĕ.

2012 çулта республикăн аграри секторне 5,4 миллиард тенкĕ ытла кредит ресурсĕсене явăçтарнă (2011 çул тĕлне ÿсĕм – 25%), çав шутра пĕчĕк калăпăшлă хуçалăхсем (килти хушма хуçалăхсем, хресчен фермер хуçалăхĕсем, ял хуçалăх потребитель кооперативĕсем) 3,3 миллиард тенкĕлĕх çăмăллăхлă кредитсемпе усă курнă, ку кăтарту пĕлтĕрхинчен 42 процент чухлĕ пысăкрах. Кăçал килти хуçалăхсем усă куракан ресурссен хуçалăхри пĕр çын пуçне тивекен шайĕ 14850 тенкĕпе танлашать, 2006 çулхипе танлаштарсан ку хисеп виçĕ хута яхăн ÿснĕ. Явăçтарнă инвестицисем çĕр ĕçченĕсене çĕнĕ техника туянма, туса илекен продукци калăпăшне ÿстерме май параççĕ. Ял хуçалăх производствин культури ÿссе пыни те савăнтарать.

2013–2015 çулсенчи вăтам вăхăтлăхри малашлăх валли йышăннă бюджет проектĕнче аграри отраслне патшалăх пулăшу памалли мĕн пур тĕп майсене палăртса хăварнă. Унсăр пуçне пĕчĕк калăпăшлă хуçалăхсене патшалăх пулăшăвĕ памалли çĕнĕ майсем палăртса хунă. Ĕçе пуçăнакан 50 ытла фермера 1,1 миллион тенкĕлĕх грантсем уйăрса панă.

Раççей Пĕтĕм тĕнчери суту-илÿ организацине кĕни пирĕн çĕр ĕçченĕсемшĕн хальхи малта пыракан технологисене ĕçе кĕртме тата туса кăларнă продукцие вырнаçтарма, ял ĕçченĕсем валли пысăк технологиллĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелеме, ĕç тухăçлăхне ÿстерме тата çавна май ял ĕçченĕсен ĕç укçине пысăклатма анлă майсем туса парать.

Пысăк пахалăхлă, экологи тĕлĕшĕнчен таса, тавар туянакансене хакĕ енчен тивĕçтерекен апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларасси конкуренци тупăшăвĕнче çĕнтерме пулăшакан тĕп майсенчен пĕри пулса тăмалла. Чăваш Енри ял хуçалăх таварĕсене туса илекенсем хăйсен умĕнче тăракан тĕллевсене пурнăçласси пирки иккĕленместĕп. Вĕсене пурнăçлама шалти хăватлă резервсем, республикăра пурăнакан кашни çыннăн ырлăхĕшĕн усă курма кирлĕ пысăк вăй-хăват пур.

Аграри секторĕн мĕн пур ĕçченне çирĕп сывлăх, ĕçре çитĕнÿсем, тулăх пурнăç тата çемьере ăнăçу сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

# И. Николаев: «Мĕн акни-лартнине пÿлмене хывма тăрăшрăмăр»



## Сăмах – ертÿçĕне

***Октябрĕн 14-мĕшĕнче – Раççейре Ял хуçалăхĕпе тирпейлекен промышленноç ĕçченĕн кунĕ, вăл çак уйăхăн иккĕмĕш вырсарни кунĕнче пулать. Уява çак тапхăрта ирттернине чĕпсене кĕркунне шутланипе ăнлантарма пулĕ.***

***Эпĕ паллă кун умĕнхи калаçăва район пуçлăхĕпе, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕпе, Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн ертÿçипе Игорь Васильевич Николаевпа ирттертĕм, ку таранчченхи ĕçе тишкерме ыйтрăм.***



– Кашни çул çĕр ĕçченне çанталăк хăйне майлă тĕрĕслет: е ытлашши шăрăх, е тăтăш çумăр. Çавăнпа та меллĕ самант суйласа çĕре вăхăтра шуратса хăварма, мĕн акни-лартнине тăкаксăр пÿлмене хывма тăрăшмалла. Черетлĕ ял хуçалăх çулне вĕçлерĕмĕр тесе шутлатăп.

Кăçал тĕш тырă акса тăвасси, унран тупăш илесси пĕтĕмĕшле 115 процентпа танлашрĕ. Иртнĕ вырмара пирĕн çĕр ĕçченĕсем вăтамран 25,6 центнер (ампар виçипе) тухăçпа 1460 тонна тырăпулă пуçтарса пÿлмене хывреç. Кунта манăн тырă-пулă пухса кĕртес ĕçре уйрăмах тăрăшулăхпа палăрнă В. Авраамов, О. Григорьев, Е. Васильев комбайнерсене, Ю. Мадиковпа Ю. Михеев водительсене ырăпа палăртас килет.

Çĕр улмин пĕтĕмĕшле тухăçĕ 750 тоннăна яхăн пулчĕ. Çак кăтарту иртнĕ çулхинчен икĕ хут ытларах. Хуçалăх «крепыш», «брянский деликатес», «удача» çĕр улми сорчĕсемпе анлă усă курать. Ял хуçалăх культуринчен пысăк тухăç илессинче вара çĕре вăхăтра тата технологие пăхăнса пахалăхлă хатĕрлени пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çак ĕçре уйрăмах Л. Макаров, А. Александров, Ю. Егоров, В. Егоров, А. Павлов ĕçченсем ырми-канми тăрăшаççĕ.

Çанталăк çумăрлă пулнипе вара хăшпĕр ĕç каярах та юлса пычĕ. Апла пулин те уй-хире йăлтах пуштăрмăр, кĕр аки-сухине те пурнăçларăмăр. Пĕтĕмĕшле илсен кăçалхи тăхăр уйăха хуçалăх тупăшлă вĕçлерĕ. Унăн шайĕ пилĕк миллион тенкĕне яхăн.

Юлашки çулсенче хуçалăх пахалăхлă вăрлăх хатĕрлесе сутассипе тĕллевлĕ ĕçлет. Çавна май тĕш тырă тухăçĕ те, пĕтĕмĕшле тупăш илесси те малтанхи тапхăртинчен палăрмаллах ÿсрĕ. Тĕш тырă тасатмалли, типĕтмелли комплекс хута яни те пирĕншĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ун витĕр пĕр талăкра çĕр тонна таран пахалăхлă тырă тухать.

Çапах та «АПК аталантарасси» приоритетлă наци проекчĕ хăй ĕçне пуçăнман тата малашне те витĕмлĕ аталанман пулсан ял хуçалăх отраслне аталантарассинче çĕр ĕçченĕн уйрăм тăрăшулăхĕ кăна çителĕксĕртерех пулнă пулĕччĕ. Çаплах вара асăннă проект Патшалăх программи пулса тăчĕ. Унăн витĕмĕпе пĕтĕмĕшле продукци туса илесси, усă курман çĕре пусă çаврăнăшне кĕртесси тата ытти те ÿсрĕ. Çак утăмăн тĕллевĕ, тĕпрен илсен, çĕр ĕçченне ытларах продукци туса илме кăна мар, рынок шайне пысăкрах пахалăхлă продукципе тухма çул уçмалла.

Çавăн пекех ял хуçалăхне сезонлă ĕç тапхăрĕнче патшалăх пĕрремĕш çул кăна мар çирĕплетнĕ хакпа сĕрмелли-çунтармалли материалсемпе тивĕçтерчĕ. Ку пулăшу та çĕр ĕçченĕшĕн питĕ вырăнлă пулчĕ.

Выльăх-чĕрлĕх отраслне модернизацилесси пурнăçланать, сарайсене реконструкцилесси пырать. Кĕтÿри выльăх йышне пĕр шайрах тытма, ÿстерме тăрăшатпăр. Çавна май ку енĕпе тĕллевлĕ ĕçленĕшĕн 1 миллион та 555 пин тенкĕ патшалăх пулăшăвне тивĕçрĕмĕр.

Усă курман çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртессине йышăннă указа пурнăçлатпăр. Çаплах вара эпир 175 гектар çум курăк пуснă уй-хире пусă çаврăнăшне кĕртнипе патшалăх пулăшăвне тивĕçрĕмĕр.

Çавăн пекех тепĕр ырă саманта та палăртас килет. Хуçалăха тăрăшнисĕр пуçне кашни ĕçчен хушма хуçалăх тытать. Юлашки çулсенче патшалăх вĕсене те курăмлă пулăшупа тивĕçтерет.

Паллах тĕрлĕ кредит, субсиди уйăрни, ăратлă выльăх ĕрчетме пулăшни, минераллă удобрени туянма паракан тата ытти çăмăллăхсем вăйра тăни ĕçлеме хавхалантарать. Çав хушăрах çĕр ĕçченĕн кăмăлне хуçакан самантсем те пур.

**– Ресурс перекетлеме май паракан инновациллĕ технологипе сирĕн хуçалăх пĕрремĕш çул кăна мар усă курать.**

– Ĕçре çак мелпе усă курнин тĕп тĕллевĕ – пĕчĕкрех тăкаксемпе пысăкрах тупăш илесси. Çакăнта чи малтанах нумай операциллĕ агрегатсем материалсене, ĕç тăкакĕсене, çын ресурсĕсене перекетлеме май панине асăнмалла. Ку вăл йăлтах – паянхи кун ыйтăвне тивĕçтерни. Юлашки çулсенче машинăпа трактор паркне çĕнетессипе çине тăрса ĕçлетпĕр. Кăçал ку ĕçе 1 миллион та 560 пин тенкĕлĕх пурнăçларăмăр.

**– Ял хуçалăхĕнче ĕçлеме çамрăк специалистсене яла илсе пырасси тата вĕсене унта тĕпленсе пурăнма хăтлă пурнăç условийĕсемпе тивĕçтересси – паянхи çивĕч ыйтусенчен пĕри.**

– Хальхи тапхăрта çамрăк специалистсем ытларах аякка кайма тăрăшаççĕ. Çавна май пирĕн вĕсене хамăр патра ĕç вырăнĕпе тата пурнăç условийĕсемпе тивĕçтермелле. Çак тĕллевпе тĕрлĕ программа пурнăçланать. Кунта чи малтанах «Ялсен 2013 çулччenхи социаллă аталанăвĕ» тĕллевлĕ федераллă тата ытти хушма программа ăнăçлă ĕçленине асăнмалла. Пирĕн хуçалăхра тăрăшакан çирĕм ытла ĕçчен каялла таврăса памалла мар субсидие тивĕçрĕ.

**– Калаçăва ырă сăмахпа вĕçлени – çĕр ĕçченне тав туни, ун кăмăлне çемçетни.**

– Çĕр ĕçĕпе тачă çыхăннă ĕçченсене, вăл шутра ачасене те, тивĕçлĕ канăва тухнисене те пысăк тав сăмахĕ калатăп, ырлăх-сывлăх сунатăп. Паллах кашни ĕçчене кунта ятран асăнма май çук, пурте вăй-хал çитнĕ таран тăрăшаççĕ. Пĕрлехи тăрăшулăхпа черетлĕ ĕçе вĕçлерĕмĕр. Ял хуçалăхĕ тĕрлĕ отрасле пĕрлештерет. Тĕллевĕ вара пурин те пĕрре – паян ĕнерхинчен тупăшларах, ыран паянхинчен ăнăçларах тимлесси.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**калаçнă.**

## Саламлатпăр



Чи хаклă çыннăмăра, савнă мăшăра, юратнă аттене, ывăлăма, ырă кăмăллă кукаçие, асаттене – Çĕньял Очăкасси ялĕнче пурăнакан **Владимир Григорьевич РОМАНОВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр, санпа мухтанатпăр. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кунçулу вăрăм та телейлĕ килтĕр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, икĕ хĕрĕпе ывăлĕ, кĕрÿшĕсем, кинĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем, хăтитăхлачисем.**

Чи хаклă та юратнă аннене, асаннене, ырă кăмăллă тăвана – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Вера Павловна ШАРОВĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей сунатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр. Ачусемпе, мăнуксемпе, тăвансемпе килĕштерсе пурăнма Турри сана тата нумай çул усратăр, чир-чĕртен сыхлатăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем, хăти-тăхлачисем, тăванĕсем.**



Юратнă аннене, кăмăллă асаннене, хисеплĕ тăвана – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Валентина Александровна АВДЕЕВĂНА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Турри сана чир-чĕртен сыхласа тăтăр, вăй-хал патăр. Пире савăнтарса нумай çул пурăнмалла пултăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем, кÿршисем, «Муркаш» фольклор ушкăнĕ, ĕçтешĕсем.**

Юратнă аннене, ырă кăмăллă асаннене, хаклă тăвана – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Вера Максимовна НИКОЛАЕВĂНА** 80 çул тултарнă ятпа чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр, телей сунатпăр. Ачусемпе, мăнуксемпе, тăвансемпе килĕштерсе пурăнма Турри сана тата нумай çул усратăр, чир-чĕртен сыхлатăр. Пире çитĕнтерсе пурнăç çулĕ çине кăларнăшăн сан умра çĕре çити пуç таятпăр.

**Пысăк салампа: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрÿшĕ, 7 мăнукĕ, кĕçĕн мăнукĕ Кирилл, тăванĕсем.**



Юратнă аннене, ырă кăмăллă кукамая, мамака, хисеплĕ тăванăмăра – Кивĕ Матьăк ялĕнче пурăнакан **Таисия Петровна ГРИГОРЬЕВĂНА** 80 çулхи юбилейпа ăшшăн саламлатпăр. Вăрăм кун-çул, телей сунатпăр сана, юратнă çыннăмăр. Турри сана инкек-синкекрен сыхлатăр, вăй-хал парса тăтăр. Эсĕ – пирĕн тĕрек, пирĕн саваăнăç, пирĕн телей. Эпир санпа мăнаçланатпăр.

**Салампа: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрÿшĕсем, мăнукĕсемпе кĕçĕн мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

Юратнă мăшăра, кине, аннене, инкене, асаннене, кукамая, аппана – Итакачкасси ялĕнче пурăнакан **Алевтина Васильевна ПЕТРОВĂНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн, чун-чĕререн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр, иксĕлми телей сунатпăр. Ачусемпе мăнукусен ырлăхне курса савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хунямăшĕ, хĕрĕсем, кĕрÿшĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, Ланцевсем, Александровсем тата ытти тăванĕсем.**

# «Пĕрлехи ӳсĕмре – кашнин тӳпи»

## *Çапла шутлать Суворов яч. хис. хуçалăх ертӳçи Владимир Андреев*

Районти тăнăç, йĕркеллĕ аталанакан, уй-хир ĕçĕсене вăхăтра туса ирттерекен хуçалăхсене палăртас пулсан, Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативне асăнмасăр ниепле те май çук. Çакна кăçалхи ял хуçалăх çулталăкĕн ĕç итогĕсем те çирĕплетеççĕ. Акă 800 гектара яхăн лаптăк çинчи тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене кунта уйăха яхăн каяллах пуçтарса кĕртсе, тасатса типĕтсе кĕлетсене хывнă. Тухăç та япăх мар – гектар пуçне вăтам шутпа 20,3 центнерпа танлашать.

Кунта çакна та палăртса хăвармасăр май çук. Тĕкакне кура тата ытти сăлтавсене пула ытларах хуçалăхсенче тырă типĕтмелли механизациленĕ сушилкăсене (КЗС) пăрахăçа кăларчĕç. Халĕ районĕпе те вĕсем 6 хуçалăхра кăна. Малалла пăхма пĕлекен Суворов яч. хис. хуçалăхра вара апла тăвас темерĕç, мĕн пуррине сыхласа хăварчĕç. Çавна май кăçал та хиртен килекен мĕн пур тырăна кĕлетсене типĕтсе кĕртме пултарчĕç.

270 гектар çинче çĕртме сухи тунă. 280 гектар çинчи кĕрхи тулăна та агротехникăпа пăхнă вăхăтра, пахалăхлă акса хăварнă. Апла пулсан çитес çулхи тухăçăн малтанхи никĕсне хывнă ĕнтĕ.

Çак кунсенче хуçалăхра кĕрхи ĕç çине хутшăннă мĕн пур техника хатĕрне, кăкарса ĕçлемелли агрегатсене хĕл каçарма хатĕрлесе çитерессипе ĕççем пыраççĕ. Вĕсене те лайăх енчен палăртмалла.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхра выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарассипе йывăрлăхсем пулма кирлĕ мар. Витесене выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарма хатĕрлесе çитернĕ ĕнтĕ. Утă 770 тонна (167 процент), сенаж 2369 тонна (197 процент) янтăласа хăварнă.

Ăнăçу хăй тĕллĕн килмест. Çĕр ĕçĕнче йывăрлăхсем пайтах. Çапла, ӳсĕм çӳлĕпе утăмлас тесен агротехникăна пăхăнни те, кирлĕ пек ертсе пыни те, ытти те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çапах та пур ăнăçăва та çынсем татса параççĕ. Пĕрлехи пĕтĕмĕшле кăтартусем мĕнле пуласси кашнинчен, кашни специалистран, рядовой кашни ĕçченрен килет. Кунта харпăр хăй хушни-кăтарту панипе мар, чуна парса, ответлăха туйса, пĕрлехи ĕçе хăйĕн ĕçĕ выранне хурса тимлени, çавна валли вĕсене майсем туса пани пысăк пĕлтерішлĕ. Çапла шутлать хуçалăх ертӳçи Владимир Славич. Çакна ял хуçалăх çулталăкĕн кăтартăвĕсемпе район шайĕнче те палăрма пултарнă ĕçченсен сăмахĕсем те çирĕплетеççĕ.



## Геннадий Викторов, хуçалăх инженерĕ:

– Хамăн пĕтĕм пурнăçăма техникăпа, çĕр ĕçĕпе çыхăнтартăм темелле. 1979 çулта Турай шкулĕнчен вĕренсе тухсан алла дипломпа пĕрле тракторист удостоверенине те илтĕм, кайран Советскинчи профессипе техника училищинче водителе вĕренсе тухрăм. Çавăнтанпа, çара кайса килнине шутламасан, трактор е автомашине рульне алăран вĕçертмен темелле.

Çак вăхăта, хуçалăхра инженер тивĕçĕсене пурнăçлатăп пулсан та, çурхи е кĕрхи ĕç çинче трактор рулĕ умне ларатăп. Кунпа пĕрлех автотрактор паркĕ те ман çинчех. Халĕ вара шăпах ĕнтĕ кĕрхи уйхир ĕçĕсене хутшăннă мĕн пур техникăна хĕл каçарма йĕркеллĕ хатĕрлесе лартассипе тимлетпĕр. Пĕтĕмĕшле илсен хуçалăхра ку ĕççем вĕçленсе пыраççĕ.

Çĕр ĕçĕнче паянхи кунпа кăна пурăнса май çук. Ыранхи, çитес çулхи çур аки çинчен те паянах шухăшламалла. Çавăнпа та мĕн пур ĕçе вăхăтра туса ирттернипе пĕрлех пахалăх пирки те самантлăха та манмастпăр. Çавна май ял хуçалăх техникине хĕл каçарма лартассипе районта ирттерекен смотр-конкурсра та малти вырăнсенчен пĕрне тивĕçме май пур тесе шухăшлатăп. Тĕрĕссипе вара смотр-конкурсра мала тухни те ун пекех пĕлтерĕшлĕ мар, чи пысăк пĕлтерĕшли – эпир халĕ тимлени пĕтĕмпех хамăршăнах пулни. Ку техникăпа çитес çул хамăрăнах ĕçлемелле пулать вĕт-ха.

Кăçалхи вырма ĕçĕсем пирки калас пулсан çанталăк ун пекех чăрмав кӳмерĕ. Палăртнă ĕçсене йĕркеллĕ туса ирттертĕмĕр. Ĕç çинче техника ванса кайса вăхăт сухатнă тĕслĕхсем пулман. Кашниех ответлăха туйса вăй хучĕ.



## Радонеж Кузнецов, комбайнер:

– Манăн ĕç стажĕ пĕчĕкех мар темелле. 33 çул ĕнтĕ комбайнерта вăй хуратăп. Кунпа пĕрлех хăй вăхăтĕнче водительте те, автомеханикра та, тĕп инженерта та ĕçлесе пăхма тӳр килчĕ. Чылай улшăнусем пулса иртрĕç çак тапхăрта ял хуçалăхĕнче.

Акă пĕр тĕслĕх кăна. Хăй вăхăтĕнче хуçалăхра 4 бригада пулнă, комбайнĕсем те кашни бригадăн. Пĕтĕмпе хуçалăхĕпе 11 комбайн таран та пулнă.

Хальхи техникăна унченхипе танлаштараймăн. Пуçласа эпĕ СК-3 комбайн штурвалĕ умне ларăччĕ. Хыççăнхи çулсенче СК-4, СК-5 «Нива» комбайнсемпе ĕçлеме тиврĕ. Халĕ хуçалăхра «хир карапĕ» пĕрре кăна. 2008 çулта туяннă çĕнĕ «Акрос-530» комбайнпа пиллĕкмĕш вырмана хутшăнтăм. Пилĕк çул ĕнтĕ пулăшакан пулса Юрий Орлов тимлерĕ.

Нимĕн те калаймăн, техника хăватлă. Апла пулин те ответлă ĕç çинче вăл чăхăмлама пултарать. Кун пек чухне уяр çанталăкра çур кун çухатни те çĕр ĕçченне мĕн хака кайса ларма пултарнине аван ăнланатпăр. Çавăнпа та кĕрхи ĕçсене вĕçленĕ май шанса панă комбайна стандартпа пăхнă требованисене кура хĕл каçма хатĕрлесе лартассине, кайран вара вырмана пур вăк-тĕвеке те шута илсе хатĕрлесе çитерессине хамăрăн пĕрремĕш тивĕç тесе шутлатпăр.

Кăçалхи ĕç итогĕсем япăх темелле мар. Ĕç çинче пĕтĕмпе 1197,7 тонна тырă вырса çапрăмăр. Кунсăр пуçне тата «интернационаллă» тивĕçе те пурнăçларăмăр – хуçалăхра вырма ĕçĕсене вĕçленĕ май Етĕрне районĕнчи «Герой» хуçалăха пулăшма тухса кайрăмăр, унта 87 тонна тырă вырса çапрăмăр.



## Андрей Архипов, водитель:

– Тăван хуçалăхри хамăн ĕç стажне 1996 çулта водительте пуçланă. Çара кайиччен вара Советскинчи профессипе техника училищине вĕренсе пĕтернĕ.

Хуçалăхсенче хальхи вăхăтра ĕç вăйĕсем çитменни вăрттăнлăх мар. Çавăнпа та кашни çын хăйĕн тĕп ĕçĕсĕр пуçне ытти ĕçе те пурнăçлама пултарни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Калăпăр, водитель е механизатор пĕр-пĕрне кирек хăçан та улмаштарма пултарччăр.

Кăçал хуçалăхра пухса кĕртнĕ тĕш тырă культурисен тухăçĕ япăх мар пулчĕ. Кĕрхи тухăç вара çурхи ĕçсене епле туса ирттернипе тӳрремĕнех çыхăнни паллă.

Çур акинче ХТЗ-17221 тракторпа хирти пусăсене культиваци туса çĕр хатĕрленĕ çĕрте ĕçлерĕм. Пĕрлехи ӳсĕмре хамăн тӳпе те пурри мана савăнтарать.

Вырма вăхăтĕнче хама çирĕплетсе панă ГАЗ-САЗ 35071 автомашинăпа КЗС-ра ĕçлерĕм. Механизациленĕ йĕтем çине илсе пырса сушилкăра типĕтсе кăлармасăр кĕлетсене пĕр тонна тырă та кĕртмен. Çавна май КЗС витĕр тухакан пĕтĕм тырăна кĕлетсене турттарса тăтăм.

Хир – йĕтем – кĕлет конвейер пĕр тикĕс ĕçлерĕ. Тырă типĕтмелли сушилкăри агрегатсене Владимир Алексеев тĕрĕс-тĕкел ĕçлеттерме тăрăшрĕ. Пĕр сăмахпа, пурте хăйсене шанса панă ĕç участокĕнче ответлăха туйса ĕçлерĕç.

Хамăн кăçалхи ĕç кăтартăвĕсем мана тивĕçтереççĕ темелле. Çак тапхăрта эпĕ автомашинăпа 114 пин тонна-километр чухлĕ ĕç пурнăçлама пултартăм. Ку вăл районĕпе чи пысăк кăтарту.



## Александр Архипов, механизатор:

– Хуçалăхра механизациленĕ икĕ звено йĕркеленĕ, вĕсене ку е вăл уй-хир ĕçĕсене пурнăçлама кирлĕ техникăпа комплектланă. Çуркунне çĕрсене дисклă йывăр сӳресем сӳрелес, культиваци туса акма хатĕрлес, ака ĕçĕсене пурнăçлас ĕçсене асăннă звено членĕсем пурнăçлаççĕ.

Мана МТЗ-82 трактор çирĕплетсе панă. Икĕ сеялкăллă агрегатпа тырă акнă çĕрте ĕçлерĕм. Сăмах май хуçалăхĕпе кун пек агрегатсем пурĕ 3 пулнă, пурте икĕ сеялкăллисем, пурне те МТЗ-82 тракторсемпе комплектланă.

Çавна каласа хăварасшăн. Хальхи вăхăтра хуçалăхра кустăрмаллă тракторсем кивĕ темелле мар. Чи «асли» те 6 çул каялла кӳрсе килнĕскер. Çавăнпа та вĕсене кирлĕ пек пăхса тăрсан уйхир ĕçĕсене пахалăхлă тата хăй вăхăтĕнче туса ирттерме майсем çителĕклĕ.

Механизаторсем валли хуçалăхра ĕç тени çулталăк тăршшĕпех çитет. Çур аки ĕçĕсене туса ирттернĕ хыççăн кăçал эпĕ çу каçа пресспа ĕçлерĕм. Утă çулса типĕтнĕ вăхăтра утă пресларăм, вырма ĕçĕсем пуçлансан вара улăм преслана çĕрте тимлеме тиврĕ. Пĕтĕмпе 1750 эталон-гектар ĕç пурнăçларăм.

Кĕр акине те хутшăнтăмăр. Кĕрхи тулăна 3 агрегатпа пĕтĕмпе 280 гектар акса хăвартăмăр. Пĕтĕм лаптăка хĕреслĕ майпа акнă. Халĕ сип-симĕс ешерекен калчаллă уйсем çине пăхма кăмăллă. Калча йĕркеллĕ хĕл каçсан вĕсем çитес кĕркунне пысăк тухăçпа савăнтараççех.

**Райадминистрацире**

# Хисеп грамотипе наградăланă

***Район администрацийĕн 2012 çулхи октябрĕн 3-мĕшĕнчи 843 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

1. Çыхăну отраслĕнче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Иосиф Николаевич ВАСИЛЬЕВА**, районти çыхăну узелĕн водительне;

– **Вячеслав Вениаминович МИХАЙЛОВА**, районти çыхăну узелĕн лини участокĕн инженерне.

2. Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Владимир Борисович РЕМНЕВА**, «Путь Ильича» агрофирмăн тракторист-машинистне;

– **Ираида Михайловна ТИХОНОВĂНА**, «Путь Ильича» агрофирмăн пăру пăхаканне;

– **Вячеслав Федорович ХАРЬКОВА**, «Путь Ильича» агрофирмăн уй-хир бригадин рабочине.

3. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Любовь Степановна ГОРШКОВĂНА**, Калайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулăн акăлчан чĕлхин учительне;

– **Владимир Васильевич ЛЮЦЕВА**, Калайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулăн физкультурăпа спорт учительне;

– **Валентина Семеновна ПЕТРОВĂНА**, Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул директорĕн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумне;

– **Лия Петровна ПЕТРОВĂН**А, Нискассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулăн пуçламăш классен учительне;

– **Николай Иванович ПЕТРОВА**, Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулăн математикăпа физика учительне.

4. Обязательнăй медицина страхованийĕн системинче тăрăшса вăй хунăшăн тата общественла ĕçсене активлă хутшăннăшăн – **Надежда Петровна СЕМЕНОВĂНА**, акционерсен «Чувашская медицинская страховая компания» уçă обществин Муркашри представительствин заведующине.

***Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн 2012 çулхи октябрĕн 4-мĕшĕнчи 866 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Светлана Вячеславовна АНИСИМОВĂНА**, «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн-ăратлăх завочĕн Кашмашри сĕт-çу фермин машинăпа ĕне сăвакан операторне;

– **Андрей Петрович БЕЛОВА**, «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн-ăратлăх завочĕн Кашмашри 1-мĕш номерлĕ сысна фермин сысна пăхакан операторне;

– **Анфиса Михайловна НАУМОВĂНА**, «Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕн машинăпа ĕне сăвакан операторне;

– **Валериян Иванович НАУМОВА**, «Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕн машинăпа ĕне сăвакан операторне;

– **Алевтина Александровна ЯРУСОВĂНА**, Александр Аркадьевич Афанасьевăн хресчен (фермер) хуçалăхĕн сысна пăхаканне.

# Тĕреклĕ хуçа çĕре хисеплет

Малашлăха пăхакансем патĕнче

Киввине туххăмрах çĕмĕрмесĕр çĕннине алла илсе хуçалăха йĕркеллĕ тытса пырасси – ăсталăх. Ку енĕпе аталанма выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче те, ÿсен-тăран продукцийĕ туса илнĕ çĕрте те, çĕнĕ техникăпа хĕç-пăшалланассинче те малта пыракан технологисене ытларах çул памалли куç кĕрет. Çапла тусан çеç эпир ума лартнă тĕллевсем патне хăвăртрах çитме пултаратпăр.

Района 2010 çулхи юпа уйăхĕнче (шăпах икĕ çул каялла) килсе кĕнĕ инвестор «Путь Ильича» агрофирмăна аталантарма пуçласан хăйне уйăрса панă ял хуçалăх çĕрĕсемпе тухăçлăрах усă курассине ÿстерессине малти вырăна лартрĕ. Çакă та, строительство ĕçĕсем пыни те, çĕнĕ технологисене аталантарни те Хорнуйсемпе Мăншаптаксене район пурнăçĕн малти фронтне кăларчĕç. Нумай çĕнĕлĕхе, районăн малашлăхĕн планĕсене эпир паян «Путь Ильича» агрофирма ура çине тăнипе, унăн аталану утăмĕсемпе çыхăнтаратпăр.

Ыран – Ял хуçалăхĕпе тирпейлекен промышленноç ĕçченĕн кунĕ. Паян ура çине тăрса пыракан агрофирма ĕçченĕсем те тивĕç ăна уявлама.

– Экономика аталанăвĕн хÿринче пыма эпир паян хамăр умра пĕр сăлтав та курмастпăр. Ял хуçалăхне аталантармалли патшалăх программисем пур, техника çĕнĕ те хăватлă, механизаторсем пĕри тепринчен маттуртарах та шанчăклăрах. Ырми-канми ĕçлесе уйхирте çĕкленнĕ пуянлăхăн пĕр пĕрчине те çухатмарăмăр эпир кăçал. Халĕ авă 500 пуç сумалли ĕне вырнаçмалăх çĕнĕ сарай хута ямалли саманта кĕтетпĕр. Кунпа пĕрлех çак калăпăшлă тепĕр сарай çĕклессипе ĕçсем пуçăнчĕç, – хĕпĕртесе калаçать хуçалăхăн ĕç тăвакан директорĕ В. Вязов.

Валерий Ивановичăн калаçăвне итленĕ май чун агрофирма хирĕсенелле, обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисенелле туртăнчĕ. Кун каç еннелле сулăннăччĕ те пĕлĕтсем хыçĕнчен курăнакан хĕвел кăвар сапнипе тавралăха каçхи шуçăм хитрелетнĕччĕ. Кĕр кунĕн илемĕ вĕççĕр мар. Ыран темĕнле пулать-ха?!

Асăннă агрофирмăна Хорнуй ял тăрăхĕнчен 804 гектар çĕр уйăрса панă. Вĕсенчен пĕр сотка çĕр  те паян ĕççĕр выртмасть. Пачах та урăхла, агрофирма ĕçченĕсем ял тăрăхĕнчи усă курман 313 гектар çĕре те пусă çаврăнăшне кĕртме пултарнă. Агротехникăна пăхăнса пурнăçланă ĕçсем кĕр çитсен çимĕçĕсемпе те савăнтарнă. Хуçалăх ĕçченĕсем гектар пуçне 19 центнер тыră-пулă, 187 гектар çинчен 250-шар центнер кукуруза пухса кĕртсе хĕл валли 4 пин тонна силос хывса хăварнă.

– Малашлăха пăхса эпир ыррине кăна шанатпăр. Агрофирма ĕçченĕсемпе пĕр çын пек пулса ăна çывхартассишĕн ĕçлетпĕр. Урăхла юрамасть. Пĕр пус хурса виçĕ пус илессине тĕллевре тытатпăр, – позитивлăха çухатмасть Валерий Иванович. – Ыранхи кунпа пурăнса мĕн çуккине тăвас пулать, киввине çĕнетмелле, пĕлменнине вĕренмелле. Кунпа пĕрлех çĕнĕ технологисене çăварлăхласа ыранхи куна çирĕппрех пăхмалла, çĕнĕ шанчăксем çуратса пысăкрах тĕллевсем лартмалла.

Йывăрлăхсем умĕнче пуç усман ертÿçĕпе калаçатăп та ял хуçалăхĕ пурăнни куç умне тухать, ÿсĕмлĕ вăй хуни савăнтарать. Çанă тавăрса ĕçлесен япăхах та пурăнмастпăр иккен. «Путь Ильича» агрофирма кăçалхи 9 уйăхра харпăрлăхри 70 пуç ĕнерен 292 тонна сĕт суса илме мехел çитернĕ. Çак тапхăрта мăйракаллă шултра выльăхсен талăкри вăтам ÿт хушаслăхĕ те 700 – 800 грама çитнĕ. Ÿсĕм мар-и çакă? Анчах хуçалăх ĕçченĕсем хăйсен вăйĕ çине ытларах та шанаççĕ. Çывăх вăхăтрах хуçалăхра çĕнĕрен çĕкленнĕ 500 пуç ĕне вырнаçмалăх сарай хута каймалла терĕмĕр. Кунти ĕççене çĕнĕ технологипе йĕркелеме пăхнăран выльăхĕсем те ăратлисем кăна пулмалла. Çакна валли ĕççем пыраççĕ ĕнтĕ. Вологда облаçĕнчен 59 пуç ăратлă тынашка килсе çитнĕ. Тепĕр 100 пуç «Ударник» хуçалăхран туянассипе ĕççем пыраççĕ. 200 пуç Киров облаçĕнчен илсе килессипе те калаçусем вĕçленнĕ. Çапла вара ял бизнесĕ Хорнуй тăрăхĕнче пĕр вырăнта лармасть, куç умĕнчех аталанать, ыттисенче шанчăк çуратать.

– Хамăр бизнеса сĕтпе çыхăнтарас терĕмĕр те пысăк ĕне кĕтĕвне тухăçлă тытма апачĕ те самай кирлĕ пуласса курса тăратпăр. Çавăнпа та çĕрпе тĕллевлĕ усă курасси – умра тăракан пĕрремĕш тĕллев. Çак кĕркунне кăна эпир Ярославка ял тăрăхĕнче 200 гектар, Турай ял тăрăхĕнче 50 гектар çĕр арендăна илсе кĕрхи культурăсем вăхăтра акса хăвартăмăр. Кĕртрисем вара пĕтĕмпе 408 гектар йышăнчĕç. Кунпа пĕрлех кăçал нумай çул ÿсекен курăксене 180 гектар акса хăварни те пирĕншĕн пустуй ĕç пулмарĕ тесе шутлатăп, – ыррине шанса калаçать ĕç тăвакан директор.

Агрофирмăри ĕççемпе çывăхарах паллашсан кунта выльăхсене апатлантарас технологие тивĕçлĕ шая çитерсен тупăш утăмĕсем татах та сулмаклăрах пуласси пирки те иккĕленÿ çук. Паян кунта кашни çын хăйĕн çăкăрне хăй ĕçлесе илессипе тăрăшать. Ĕçлекенĕн ăнăçăвĕ те, Турă пани те, телейĕ те юнашарах. Асăннă хуçалăхра пулсан çакна кашни специалистпа ĕçчен ăнланни куç умĕнче. Малашлăха шанса ĕçлекенсем хушшинче вара çамрăксем ытларах пулни ĕмĕтсем пурнăçланассине пĕртте иккĕлентермест.

Ĕçченсем тенĕрен, вырăнти ертÿçĕ хуçалăхăн тĕп инженерне Г. Шарапова, А. Блинов инженер-строителе, В. Харьков тĕп энергетика, К. Димитриева ветеринари фельдшерне, О. Никитин механизатора, ĕнесене машинăпа сăвакан С. Иванова оператора, И. Васильев çамрăк инженера ыттисемшĕн тĕслĕх вырăнне илсе кăтартрĕ.

– Юлашки вăхăтра хамăр патăмăра çамрăксенчен 2 зоотехник, выльăх тухтăрĕ ĕçлеме илтĕмĕр. Çапах специалистсем çитсех каймаççĕ. Çавăнпа та малашлăха пăхакан çамрăксене хамăрпа çыхăнма сĕнетĕп, – терĕ çитес çул агрофирмăшăн татах та тухăçлăрах пуласса шанса Валерий Иванович.

**А. БЕЛОВ.**




# Уйăх календарĕ

***Çĕр ĕçченĕ, ялта пурăнакан халăх йăли-йĕркипе çак кунсенче Пукрав ăшши тытассипе тăрăшать. Мĕн ĕçлени вырăнлă-ха çывăх кунсенче? Ку ыйту çине сад-пахчаçăн уйăх календарĕ çакăн пек хурав парать:***

**Юпа уйăхĕн 14-мĕшĕ.** Пÿлĕмри ÿсен-тăран сăтăрçисемпе кĕрешме меллĕ кун. Йăрансем çинче ĕçлеме юрать. Çуркунне вăрлăх акма çĕр хатĕрлемелле.

**Юпа уйăхĕн 14 – 16-мĕшĕсем.** Нимĕн те акма-лартма, куçарса лартма сĕнместпĕр. Çуркунне вăрлăх акма çĕр хатĕрлени пăсмасть. Купăста тăварлама тата йÿçĕтме тăхтăр.

**Юпа уйăхĕн 16 – 18-мĕшĕсем.** Йывăçсемпе тĕмсене касма мелсĕр вăхăт. Хăмла çырлин хунавĕсене пĕрле çыхса хĕл каçма çĕр çумне авса хуни вырăнлă. Улма-çырла йывăççисемпе тĕмсене лартмалли вăхăт. Йывăçсем çинчен типнĕ, анчах тăкăнман çимĕçсене пуçтармалла. Купăста тăварлама тата йÿçĕтме юрăхлă кунсем.

**Юпа уйăхĕн 18 – 20-мĕшĕсем.** Йывăçсемпе тĕмсем çинчен типнĕ туратсене иртмелле. Нумай çул ÿсекен чечексене йывăç кĕрпипе, торфпа, лăсăсемпе витмелле. Сад-пахчара шăшисем валли наркăмăшлă им-çам хума пуçламалла.

**Юпа уйăхĕн 20 – 22-мĕшĕсем.** Пÿлĕмри условисенче симĕсле çиме суханпа ыхра лартма юрать. Купăста йÿçĕтни вырăнлă. Хĕлле шăнма пултаракан культурăсене витмелле. Улмуççи вуллисене шăшисенчен сыхласа хÿтĕлев аркисем çыхмалла.

**Юпа уйăхĕн 22 – 24-мĕшĕсем.** Лартма та, шăварма та, апатлантарма та мелсĕр кунсем. Нумай çул ÿсекен чечексемпе çĕр çырлисене хĕле валли витмелле.

**Юпа уйăхĕн 24 – 26-мĕшĕсем.** Ÿсен-тăрана пачах касма юрамасть. Пÿлĕмри условисенче симĕсле çиме суханпа ыхра лартма юрать. Пÿлĕмри ÿсен-тăрана апатлантармалла.

**Юпа уйăхĕн 26 – 28-мĕшĕсем.** Нумай çул ÿсекен чечексем тĕлĕшпе сивĕрен хÿтĕлев ĕçĕсем тумалла. Улмуççисемпе грушăсен вуллисене шăшисем кăшласран лăсăсемпе е рубероидпа чĕркесе çыхмалла.

**Юпа уйăхĕн 28 – 30-мĕшĕсем.** Нимĕн те акма-лартма, куçарса лартма сĕнместпĕр.  Пÿлĕмри условисенче симĕсле çиме суханпа ыхра лартни ытлашши мар.

**Юпа уйăхĕн 30 – 31-мĕшĕсем.** Çĕр çырли тĕммисене тата нумай çул ÿсекен чечексен плантацийĕсене ăшă тытмалла витĕр. Улмуççисемпе грушăсен вуллисене шăшисем кăшласран лăсăсемпе картлăр. Пÿлĕмри условисенче симĕсле çиме петрушка акма юрать.

Ялти спорт

# Б. Павлова асăнса – 12-мĕш хут

Пурăннă пулсан Болеслав Павлов спорта аталантарассинче чылай ыра пуçару тунă пулĕччĕ. Анчах та вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Халĕ вара спортпа туслă пулнă пиччĕшĕн ячĕпе Виталий Павлов кашни çулах мини-футбол турнирне йĕркелет.

Иртнĕ шăмат кун та Тивĕшре Болеслав Павлова асăнса мини-футбол вăййисем питĕ интереслĕ иртрĕç. Унта пилĕк команда вăй виçрĕ: «Муркаш», «Шетмĕ», Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн команди, «МетПласт» тата Мăн Сĕнтĕр райповĕн командисем. Çумăрлă çанталăка пăхмасăрах командăсем питĕ хĕрÿ вăйăсем кăтартрĕç.



Сăн ÿкерчĕкре: вăйă саманчĕ.

– Районти çамрăксем выляччăр тесе кăçалхи турнира Муркаш район командисене кăна хутшăнма ирĕк патăмăр. Малтанхи çулсенче пулсан кÿршĕ районсемпе хуласенчен те командăсем хутшăннă. Кăçалхипе 12-мĕш хут йĕркелерĕмĕр çак вăйăсене. Спортран аякра тăман пичче Болеслав вăхăтсăр çĕре кĕнĕ хыççăн 2000 çултанпа ирттеретпĕр мини-футбол турнирне, – пĕлтерчĕ ăмăртăва йĕркелекен Виталий Павлов.

Районти командăсенче çамрăксем кăна мар, ветерансем те пуррине ырламалла. «Ăруран ăрăва» тени спортра та пулмаллах.

Çумăра пула футбол хапхисем умĕнчи çĕр самаях çăрăнса пĕтнĕ, мечĕкĕ, паллах, пылчăклă, ÿкес пулсан та футболистсем йĕпе те таса мар курăк çине ÿкеççĕ... – акă вăл футбола чăнласах парăннă арçынсен вăййи тата командăсем хăйсен пуçарулăхĕпе ăмăртăва хутшăнни. Хушу мелĕпе хутшăнакансемшĕн ăмăрту яланах кичем иртет, Тивĕшре вара ăшă кăмăл, савăнăç хуçаланчĕ.

Çак вун иккĕмĕш хут иртнĕ ăмăртура «МетПласт» команда çĕнтерчĕ, 2500 тенкĕ укçан парнене тивĕçрĕ. 2-мĕш вырăна тухнă Мăн Сĕнтĕр райповĕн команди 2000 тенкĕ, 3-мĕш вырăнти Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн команди 1500 тенкĕ хавхалану парнисене тивĕçрĕç. Призлă вырăн йышăнайманнисене те 500-шер тенкĕ парса хавхалантарчĕ Виталий Павлов – 12 çул хăйĕн пиччĕшĕн сăнарне асра тытса ирттерекен ăмăртусен улшăнми йĕркелÿçи тата спонсорĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**

Тимлĕх

# Никам та хваттерсĕр юлмĕ

Чăваш Республикин социаллă политикин пĕлтерĕшлĕ задачисенчен пĕри аслă ăру çыннисене пулăшасси пулса тăрать. Ветерансене пурăнма йĕркеллĕ условисем туса пама тăрăшаççĕ, пенсисене вăхăтра тÿлесе тăраççĕ, социаллă çăмăллăхсемпе тивĕçтереççĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерессин ыйтăвĕ те айккинче тăрса юлмасть. «Ветерансем çинчен» Федераллă саккунпа килĕшÿллĕн хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма тивĕç тесе палăртнă Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсемпе вăрçăра вилнĕ салтаксен тăлăх мăшăрĕсене пурăнмалли çурт-йĕр туянма свидетельствăсемпе тивĕçтереççĕ.

Пирĕн районта 2009 çулта асăннă свидетельствăсене 3 çын илнĕ, 2010 çулта – 136 çын, 2011 çулта – 52 çын. Кăçал 41 ветеран хăйĕн пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатнă.

2012 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма 2005 çулхи мартăн 1-мĕшĕ хыççăн черете илнĕ Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсен, вăрçăра е вăрçă хыççăн вилнĕ инвалидсен тата вăрçă участникĕсен çемье членĕсен списокĕнче 6 çын. Вĕсем те çывăх вăхăтра хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатĕç.

**Хамăр инф.**

Православи уявĕ

# Ыран – Пукрав

Христосăн чăн тĕнĕпе пурăнакан çынсем хăйсен хуйхипе инкек-синкек вăхăтĕнче çÿлти патша Амăшĕнчен – пур хуйхăллисене те лăплантараканран – пулăшу илме ĕмĕтленеççĕ. Вĕсем Турă Амăшĕ хăй вилес умĕн апостолсене те, пур ĕненекене те: «Эпĕ сире тăлăха хăвармăп. Хам ывăл умĕнче сире тархасласах кĕл тăвăп, сире яланах витсе, хÿтĕлесе тăрăп», – текен сăмахсене асра тытаççĕ.

